# ПУЛТАРУЛĂХ ÇĂЛКУÇĔ

Кашни писатель пекех, хăй çуралнă яла, унти вăрманпа шыв-шура, унти çынсене аса илнĕ чух Афанасьев Порфирий чи ăшă сăмахсем тупма пĕлет. Курăр-ха, акă:

«Хитреччĕ, илемлĕччĕ тавралăх. Ял çуммипе çурхи пăтранчăкран тасалнă çап-çутă Çарăмсан юхса выртать, ун икĕ айккипе ешĕл тум тăхăннă ĕшнесенче чăлт-шурă çĕмĕрт йывăççисем ырă шăршипе хăйсем патне йыхăраççĕ.

Уроксем çинчен манса кайсах çав ĕшнесене çул тытаттăмăр эпир. Женя шăпчăксене шăхăрса витлетчĕ, лешсем, пĕр-пĕринпе ăмăртнă пек, касăхса кайсах юрлама тытăнатчĕç. Çамрăкчĕ эпир ун чух, çутă ĕмĕт-шухăш та, пуласси те — йăлтах малтаччĕ-ха».

Тепĕр калавĕнче П. Афанасьев хăйсен ялĕ—Тутар республикинчи Çĕн Йĕлмел — ăçтан пуçланса кайни çинчен каласа хăварать.

«—..Атăл хĕрринчен чăвашсем кунта ахальтен тарса килмен. Эпир халь пурăнакан вырăн вунсаккăрмĕш ĕмĕр варринче чи улах çĕрсенчен пĕри пулнă. Хусан кĕпĕрнинче, Атăл çывăхĕнче çĕр хĕсĕк пулнипе, çитменнине вĕсене улпутсем, мăнастирсем турта-турта илнипе, унтан... вырăс мар халăхсене ирĕксĕр тĕне кĕртнипе чăвашсен ăçта кайса кĕрес-ха? Кам ăçта пĕлет — унта тарнă вĕсем. Ситукан йăхĕ çак тавралăха килсе вырнаçнă...»

«Çураçнă хĕр» калаври Старков учитель те çак енне кăмăллать.

«Пулă вылять Çарăмсанта...» Никодим çырăвĕнчи çак сăмахсем пушшех илĕртрĕç ăна. Ара, çав пысăках мар юханшывăн илемне те, унăн пуянлăхне те лайăх пĕлет Старков. Вунă çул каярах, Шупашкарти пединститутра вĕреннĕ чух, пĕрре кăна мар кайса килнĕ вăл Ухунькана. Пуллине те тытнă, Никодим ашшĕпе пыл та татнă (кăна астуса юлăпăр. Хв. У.), хĕлле куян та йĕрленĕ. Çапла, çутçанталăк пуян Çарăмсан тăрăхĕнче. Çавăнпах-и — çынисем те хăйне евĕр илемлĕ. Çакна пĕррремĕш хутĕнчех асăрханăччĕ Старков. Тата хĕрсем мĕнле хитре унта, пĕлесчĕ сирĕн! Вĕсен çăл шывĕ пек шăнкăртатакан уяв юррисене нихçан манмăн...

Пўрни темелле-ши — çавăн хыççăн Старков пĕтĕм канăçне çухатрĕ. Туртнăçем туртать ăна тем амакĕ çак яла...»

Путех Çарăмсан тăрăхĕнчен тухнă аслă тăхăмĕнчен Николай Иванович Шелепирен вĕренет пуль П. Афанасьев хитре çырма. Астăватăр-и Шелепи сăмахĕсене?

**Хĕвелпеле вăй выляççĕ**
**Çарăмсанра пуллисем.**
**Чечексемпе савăнаççĕ**
**Улăхсенче кўллисем.**
**Кайăк йăва çавăрать**
**Пĕр-пĕринпе пĕрлешсе.**
**Çарăмсанпа ыр курать**
**Тĕрлĕ халăх мирлешсе.**

Вăтăр çула яхăн ĕлĕк эпĕ те пулса курнă унти чăваш ялĕсенче. Çарăмсан пуллипе ракне те çисе пăхнă, Çĕн Йĕлмелти хĕрсен вăйă юррисене итлесе киленнĕ, ытараймасăр çыра-çыра илнĕ вĕсене. Йывăçлă пысăк ял, ун тавраш̆ĕнчи вăрман, ял варринчи касхи вăйă карти, хапха умне тухса ларнă кунĕпе ĕçлесе ĕшеннĕ ватăсем, çывăхри кўлĕ енчен килекен уçă сывлăш — халĕ те пулин чĕре варринчех.

Тата темиçе калавĕпе сăввинче çырса кăтартрĕ пире П. Афанасьев хăйсен енчи çĕршывпа çынсем çинчен. Ĕнтĕ пĕтет-ши унти çинчен çырса? Çук иккен, ĕмĕрлĕх тема вăл — поэт çуралнă тавралăх, пысăк çĕршывăн пĕчĕк кĕтесĕ, аслă тĕнче çине пăхмалли пирĕн чўрече. Тепĕр чух сăвăç е калавçă йăлтах урăх япала çинчен çырать пек, анчах пурне те вăл çав чўрече витĕр курса хаклать, ун витĕр курса ăнланать.

П. Афанасьева илсен, вăл çырнăçем илемлĕрех, тарăнрах, чунпарах çырма тытăнчĕ. Чăн-чăн поэт çапла пулмалла та ĕнтĕ. Акă унăн пĕр сăвви. «Пылçырма» ятлă вăл.

**Çитмĕл çичĕ çăлкуç —**
**Пылçырма,**
**Сулхăну сан —**
**Чуна пусарма.**

**Сăмах пур халăхра:**
**Чăвашран**
**Тарса килнĕ кунта**
**Ситукан.**

**Вăрманта ўснĕ**
**Ял çине ял —**
**Хырлăх, Вăтăр Юман,**
**Хурамал.**

**Манăн несĕл**
**Юратнă йĕлме —**
**Çĕн Йĕлмелĕ**
**Пуçланă ўсме.**

**Çитмĕл çичĕ çăлкуç —**
**Пылçырма**
**Чăваша савăнма,**
**Ыр курма.**

**Мĕн тери юрăсем**
**Ку енче!**
**Калăн — юрă таппи**
**Çăлсенче.**



**Кашни çăлĕ**
**Пилленĕ-и, тен,**
**Халăха пĕрер юрă**
**Куллен.**

**Çитмĕл çичĕ çăлкуç —**
**Пылçырма,**
**Эс вĕрентрĕн мана**
**Юрлама.**

Хăйĕн ытарма çук хитре сăввине поэт çапла вĕçлет:

**Халăха, пурнăçа**
**Савнипе**
**Çитмĕл саккăрмĕш çăл**
**Пулăп эп.**

Мĕн чухлĕ шухăш, вĕри кăмăл, илем, истори, информаци пĕр пĕчĕкçĕ кăна сăвăра! Тата, вилĕмсĕр «Арçури» пек, И. Тăхти калавĕсем пек, çав тери чăвашла вăл. Çапла, чи илемлĕ вырăн тĕнчере— эс çуралнă тавралăх, унти уй-хир, ешĕл вăрман, çырма-çатра. Тăван çĕршыв. Анчах, вулакан ăна ĕнентĕр тесен, ун çинчен каласа пама пĕлмелле-çке. П. Афанасьев пĕлет каласа пама. Эпир ĕненетпĕр сăвăçа. Шанатпăр ăна.

Малашне вăл тата пусăрăнарах, тимлĕрех ĕçлесен, хăйĕн ĕçне тата тиркесерех сăвăрсан, ун умĕнчи çул уçăлнăçем уçăлса пырĕ.

Хветĕр УЯР.